Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

96-97 (7413-7414) №№ ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи ноябрĕн (чӳк) 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Ноябрĕн 21-мĕшĕ – Налук службин ĕçченĕсен кунĕ**

**НАЛУК СЛУЖБИН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе – Раççей Федерацийĕн налук органĕсенче ĕçлекенсен кунĕпе саламлатăп!

Сирĕн ĕç-хĕл обществăн социаллă тăнăçлăхне кăтартать, республика бюджечĕн тупăш пайне ӳстересси çине витĕм кӳрет. Федераллă налук службин Управленийĕн Чăваш Республикинчи сотрудникĕсем налук законодательствине пăсакансемпе эффективлă кĕрешессине йĕркелерĕç. Эсир хăвăр умра тăракан задачăсене ăнăçлăрах пурнăçланинчен социаллă ыйтусене татса парассине курăмлăрах пурнăçлама май килет, обществăлла инфраструктура малтуртăмлă аталанать, палăрăмлă социаллă-экономика программисем пурнăçа кĕреççĕ.

Тăван республика малашне те ăнăçлă аталанас ĕçе Чăваш Енри налук службин сотрудникĕсем тивĕçлĕ тӳпе хывасса шанатăп. Сире пысăк профессилĕхшĕн, яваплăхшăн тав тăватăп. Пурнăçра та, ĕçре те ăнăçусем, çирĕп сывлăх, телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ**.

**НАЛУК СЛУЖБИН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире çывхарса килекен РФ Налук органĕсенче ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе саламлатăп. Сирĕн ĕç питĕ яваплă, мĕншĕн тесен район экономикипе социаллă аталанăвĕ бюджетра укçа-тенкĕ мĕн чухлĕ пулнинчен нумай килет. Бюджет сферин ĕçченĕсене ĕç укçине, пенсионерсене пенси укçине вăхăтра пама майсем туса паратăр, мĕншĕн тесен çакă йăлтах бюджетра пуçтарăннă укçа-тенкĕпе çыхăннă. Эсир хăвăрăн професси тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлатăр, предприятисемпе организацисем, уйрăм çынсем налуксене вăхăтра тӳлеччĕр тесе тимлетĕр.

Эсир малашне те умри тивĕçĕрсене таса кăмăлпа пурнăçласса шанатăп. Сире пурне те çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемйĕрсенче килĕшӳ, пурнăçра телей сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Министерство кунĕнчен**

## Пулăшу пур. Ытти хамăртан килет

Юн кун республикăра министерство кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн районта ЧР Юстици министрĕ В.П. Петров, унăн çумĕсем М.А. Кузьмин, Л.Н. Арзуманова, В.Н. Капитонов, Патшалăх регистрацийĕн ЧР управленийĕн муниципаллă йĕркелӳсен пайĕн пуçлăхĕ Т.Г. Расколова, Раççейри наказанисене пурнăçлассипе ĕçлекен федераллă службăн ЧР Управленийĕн пуçлăхне пулăшаканĕ М.А. Казаков, Раççейри суд приставĕсен федераллă службин ЧР Управленийĕн ертӳçин çумĕ В.В. Галицкий, ЧР нотариаллă палатăн президенчĕ Е.И. Соколова, ЧР суд департаменчĕн Управленийĕн ертӳçи В.П. Петров килчĕç. Вĕсем чи малтанах район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕç.

Чи малтанах ЧР Юстици министрĕ В.П. Петров район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн ĕне ферминче пулчĕç. Сăмах, тĕпрен илсен, унта ферма пуласлăхĕ, унăн малашнехи аталанăвĕ йăлтах коллективран хăйĕнчен килни тавра пулчĕ. Ку тĕлĕшпе кунта малтанхи утăмсене тума пуçланă ĕнтĕ. Чуманкасси ял тăрăхĕн администрацийĕн çуртне вара тĕл пулăва ял тăрăхĕн депутачĕсем, учительсем, ял çыннисем пуçтарăнчĕç.

Сăмах кунта чи малтанах ЧР Президенчĕн ялсем патне çул тумалли çинчен калакан Указĕ пирки пулчĕ. ЧР Юстици министрĕ çакна палăртрĕ. Республикăра пулса иртекен пур улшăнусем те халăхăн пурнăç шайне лайăхлатассипе çыхăннă. Президентăн нумаях пулмасть тухнă ЧР ĕç укçине пысăклатмалли мерăсем çинчен калакан Указĕ те çакнах çирĕплетсе парать. Е тата çĕнĕ çул уявĕ вăрăма кайнипе декабрьшĕн ĕç укçине çĕнĕ çул уявĕ умĕн пама палăртнине пĕлтерет. Республика халăхĕшĕн тăрăшни çинчен. Республикăна шкул автобусĕсен çĕнĕ ушкăнĕ килсе çитни, шалти ĕçсен пайĕсем валли автотранспорт туянассипе çыхăннă мероприятисем т.ыт. те – йăлтах пирĕн тăнăç пурнăçшăн тунă утăмсем. Анчах та паян çӳлтен татăлса анса ӳкессе кĕтмеллине пĕлтермест çакă. Хамăрăн пурнăç лăпкăлăхĕ, çирĕплĕхĕ йăлтах хамăртан килет. Татса памалли проблемăсем пирĕн сахал мар вĕт. Преступленисен йышĕ ӳссех пырать. Çул çитмен çамрăксем тĕрĕс çултан пăрăнни вара – инкек мар-и? Ах! тесе хуйхăрса ларнипе вĕсем тĕрĕс çул çине тухаймаççĕ. Çавăнпа та депутатсем çав “йывăр” ачасене, “йывăр” çемьесене пăхса-сăнаса тăрсан, вĕсемпе час-часах тĕл пулсан, усси ытларах пулмалла.

– Паян пурнăç çине çĕнĕлле пăхмалла, çĕнĕлле шухăшламалла. Район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн çак сăмахĕсемпе те килĕшмесĕр тăма май çук. Пурнăç паян пирĕнтен çапла ыйтать. Эпир вара хамăршăн та ытлашши утăм тума ӳркенетпĕр. Халăхри пек каласан, “ача укçинех” илер-ха.

– Тӳлемеççĕ, – тесе кӳренетпĕр. Тӳлеччĕр тесе, çакна валли кирлĕ справкăсене пуçтармастăр.

**(Вĕçĕ 8-мĕш стр.).**

**Ĕç сыхлавĕн тата ĕç сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе**

## Саккуна пăхăнни хамăршăнах лайăх

Иртнĕ номерсенчен пĕринче сире пирĕн районти предприятисемпе организацисенче Чăваш Республикинчи Патшалăх ĕç инспекцийĕ ĕç тата ĕç сыхлавĕ çинчен калакан законодательствăн требованийĕсене епле пăхăннине тĕрĕслени пирки пĕлтернĕччĕ. Çак кунсенче вара шăпах асăннă тĕрĕслевĕн пĕтĕмлетĕвĕсемпе пĕрле семинар-канашлу иртрĕ. Унта предприятисемпе организацисен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, кадрсемпе ĕçлекен пай ĕçченĕсем, ĕç сыхлавĕн специалисчĕсем, профком председателĕсем хутшăнчĕç. Семинар-канашлăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ, ертсе пычĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа районти предприятисемпе организацисенче ĕç законодательствине епле пăхăннине тата РФ Ĕç кодексне кĕртнĕ улшăнусене пăхса тухрĕç. Хăйĕн сăмахĕнче Чăваш Республикинчи Патшалăх ĕç инспекцийĕн ертӳçин çумĕ В.В. Андреев хăш предприятисенче ĕç законодательствине хăш енĕпе пăснă тĕслĕхсем çинче чарăнчĕ. Çакна палăртрĕ. Тĕрĕслев вăхăтĕнче Чăваш Республикинчи Патшалăх ĕç инспекторĕсем ĕç законодательствине пăснă 164 тĕслĕхе тупса палăртнă.

РФ Конституцийĕн РФ Ĕç кодексĕпе килĕшӳллĕн ĕç укçине вăхăтра тата уйăхра икĕ хутчен памалла. Тĕрĕслев вăхăтĕнче 14 предприятире ăна вăхăтра тӳлеменни палăрнă. Парăм уйрăмах Е. Андреев яч. хис., Ленин яч. хис., “Ударник”, “Колос” тата ытти хуçалăхсенче пысăк.

12 предприятире ăна уйăхра 1 хут çеç тӳлеççĕ, 4 çĕрте ĕç укçине хăçан памаллине палăртман.

РФ Конституцийĕпе килĕшӳллĕн кашни çыннăн канма право пур. Ĕç килĕшĕвĕпе ĕçлекенĕн 28 календарлă кун чухлĕ отпуск параççĕ. Отпуск укçине вара отпуска кайиччен 3 кун маларах памалла. Кăна пăсакансем те пур-ха районта. Çавăн пекех отпуска каймалли графика календарлă çулталăк пуçланиччен 2 эрнерен кая юлмасăр тумалла. “Оринино”, Чкалов, Ильич, “Моргаушрайгаз” филиалĕсенче тата ытти çĕрте тĕрĕслев вăхăтĕнче отпуска ямалли графиксем пулман. 8 хуçалăхра ку йĕркене пăснă.

Ĕç кодексĕпе килĕшӳллĕн ертӳçĕн ĕçлекенсене ĕç укçи мĕнрен тăни тата вĕсем мĕн чухлĕ пулни пирки пĕлтермелле. Урăхла каласан, расчет хутне памалла алла. Ĕçе илекенĕн ĕçе кĕрекенпе 2 экземпляр ĕç килĕшĕвне тумалла. Пĕри ĕçлекенте, тепри ĕç паракanta упранмалла. Чкалов, К. Иванов яч. хис., “Хлебороб” тата ытти хуçалăхсенче ĕç килĕшĕвĕсене çырса хатĕрлемен.

Ĕç килĕшĕвне татнă хыççăн ĕçлекене ĕçрен тухнă кун расчет тумалла. Ку йĕркене 6 çĕрте пăсни палăрнă.

Тĕрĕслев вăхăтĕнче çавăн пекех ĕç кĕнекине тултарса çырнă йĕркепе пăснă тĕслĕхсем чылай пулнă.

Уяв кунĕсенче е кану кунĕсенче ĕçлеме килĕшнине çырса пĕлтерсен çеç ĕçлеттерме юрать. Муркашри кирпĕч заводĕнче ку тĕлĕшпе йĕркене пăснă иккен.

Ĕç кодексĕпе килĕшӳллĕн инвалидсен отпускĕ 28 мар, 30 календарлă куна тăсăлмалла. Кăна та районти пур хуçалăхсенче те пĕлмеççĕ иккен.

Е тата ĕç тивĕçĕсене пурнăçламаншăн айăплисенчен шыраса илни çинче чарăнар-ха.

РФ Ĕç кодексĕн 192-мĕш статйипе килĕшӳллĕн чи малтан асăрхаттармалла, выговор памалла. Унтан вара ĕçрен хăтараççĕ.

Тĕрĕслев вăхăтĕнче вара çакă курăннă. Мĕнле кăна айăпламаççĕ ертӳçĕсем ĕçлекенсене: строгий выговор та параççĕ, сахалрах ĕç укçиллĕ вырăна куçараççĕ, штраф тӳлеттереççĕ т.ыт. те. 6 çĕрте тупса палăртнă çакăн пек йăнăша шыраса илессине.

Дисциплина тĕлĕшĕнчен шыраса илесси çинчен чи малтан ĕç законодательствине пăснă ĕçлекенĕн ăнлантарса панине çыртармалла. Лешĕ хирĕçлет пулсан, акт çырмалла. Ку йĕркене Муркашри кирпĕч заводĕнче пăхăнман.

Çапла вара ĕç законодательствине пăснăшăн 31 ертӳçĕне пурĕ 24,5 пин тенкĕлĕх штраф панă. Йĕркене пăснă 44 тĕслĕхе пĕтерме предписани çырнă.

Кун йĕркинче пăхса тухнă тепĕр ыйту çинче те чарăнмасăр тăма çук. ЧР Патшалăх ĕç инспекцийĕн пай пуçлăхĕн çумĕ В.М. Пашин тĕрĕсленĕ предприятисенче ĕç сыхлавĕн правилисене епле пăхăнни çинче чарăнчĕ.

Ку тĕлĕшпе 30 çĕрте пулнă вĕсем. Вĕсенче ĕç сыхлавĕн пахалăхне ӳстерес тесе тимлеççĕ пулин те, тĕрĕсмарлăхсене те тупса палăртнă. Предприятисенче ĕç сыхлавне лайăхлатас тĕллевпе мероприятисене планламаççĕ, вĕсене финансламаççĕ, пурнăçшăн хăрушă оборудованисемпе ĕçлекенсем ятарлă вĕрентӳ витĕр тухмаççĕ, электроустановкăсене техникăлла эксплуатацилесси çинчен калакан правилăсене пăсаççĕ т.ыт.те.

Ку тĕлĕшпе тĕрĕсленĕ 30 предприятире кашнинче ĕç сыхлавĕн законодательствине пăснине тупса палăртнă. Ертӳçĕсене пурĕ 25900 тенкĕлĕх штраф панă. Профсоюз организацийĕсен республикăри пĕрлешĕвĕн ĕç сыхлавĕн пай пуçлăхĕ С.Д. Максимов районти ял хуçалăх предприятийĕсенче ĕç сыхлавĕ тата производствăра аталанасси епле шайра пулни çинче чарăнчĕ.

Кун йĕркинчи 4-мĕш ыйтупа район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов тухса каларĕ. Вăл ЧР Президенчĕн кăçалхи октябрĕн 11-мĕшĕнчи 87-мĕш номерлĕ “Чăваш Республикинче ĕç укçине ӳстерессипе пурнăçламалли хушма мерăсем” Указĕ çинче чарăнчĕ. Унпа килĕшӳллĕн уйăхри вăтам ĕç укçи пурăнмалли минимумран пĕчĕк пулмалла мар. 3 кварталта вăл кашни çын пуçне 2736 тенкĕпе танлашрĕ. Уйрăммăн илес пулсан, ĕçлекенсен – 2932 тенкĕ, пенсионерсен – 2197 тенкĕ, ачасен – 2679 тенкĕ.

Анчах та “Энергосервис”, “Моргаушрайбыт” чикĕллĕ яваплăхлă обществăсен, “Моргаушагропромснаб” МП, “Моргаушагропромхими” ОАО вăл пурăнмалли минимумран палăрмаллах пĕчĕк.

Канашлăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов пĕтĕмлетрĕ. Çакна палăртрĕ. Кашни ĕçлекене тивĕçлĕ ĕç условийĕсем туса парасси, производствăра инкек ан пултăр тесе тăрăшасси, ĕç укçине вăхăтра тӳлесси тата вăл пурăнмалли минимумран пĕчĕк пулмалла маррине ертӳçĕ пĕлмесĕр тăма пултараймасть çеç мар, ĕç законодательствине пăхăнасси – унăн тивĕçĕ. Çавăнпа та тупса палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ**

## Чăваш Республикинче халăха социаллă пулăшу памалли хушма мерăсем çинчен

Халăха хушма социаллă пулăшу парас тĕллевпе Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнчи ырă туртăмсене шута илсе **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çапла тумалла:

республикăн тĕллевлĕ программисене вăхăтра тата туллин пурнăçлас, 2006 çулта Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн май пур таран пысăк кăтартăвĕсене тата бюжет тăкакĕсен тухăçлăхне тивĕçтерес енĕпе мерăсем йышăнмалла;

çитес çул пуçламăшĕнче кану тата уяв кунĕсем вăраха кайнă май Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен укçа-тенкĕпе тытса тăракан бюджет учрежденийĕсен ĕçченĕсене раштав уйăхĕшĕн тӳлемелли ĕç укçине вăхăт çитмесĕрех 2007 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен тӳлессине йĕркелемелле. Бюджет сферин ĕçченĕсене ĕç укçи тӳлемелли çак йĕркепе малашне çуллен усă курассине çирĕплетес;

Раççей Федерацийĕн финанс министерствипе педагогика ĕçченĕсене классене ертсе пынăшăн уйăхсерен укçан хавхалантарма кирлĕ укçа калăпăшĕ пирки килĕшсе татăлмалла, ăна çулталăк вĕçлениччен туллин тӳлесе татассине тивĕçтермелле;

Халăхăн çăмăллăхлă категорийĕсен ыйтăвĕсене пысăк пахалăхпа тивĕçтерес тĕллевпе пассажирсене илсе çӳреме хушма автобуссем туянмалла, автотранспорт предприятийĕсене халиччен тӳленĕ дотацисен вырăнне граждансене уйăхсерен укçа тӳлемелли йĕркене вăхăтра хатĕрлемелле;

2007 çулта шкул ачисемпе студентсем валли пассажир транспорчĕпе çăмăллăхпа çул çӳремелли билетсене упраса хăвармалли сĕнӳсем, çавăн пекех Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думине саккун кăлармалли пуçарупа тухмашкăн Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тăратма материалсем хатĕрлемелле;

йĕркелĕхе тата çулсем çинче хăрушсăрлăха çирĕплетес тĕллевпе Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин Çул çӳрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕ валли ятарлă продукци, çав шутра транспорт хатĕрĕсем туянмалла, ялсене çитекен автомобиль çулĕсен строительствипе çыхăннă ĕçсене хăвăртлатмалла;

кĕркуннехи-хĕллехи тапхăрта социаллă пурнăçпа тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх объекчĕсене йĕркеллĕ ĕçлеттерес тĕллевлĕ мерăсене пурнăçламалла, уйрăм муниципалитет тытăмĕсене пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен строительствишĕн подрядчиксене тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтерекенсене укçа тӳлесе татмашкăн хушма пулăшу памалли майсене пăхса тухмалла.

2. Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене тата организацисене тата çак Указпа килĕшӳлĕн çулталăк вĕçĕнче ĕç укçи тӳлемелли йĕрке çинчен калакан йышăнусем тума сĕнес.

3. Çак Указ ăна официаллă майпа пичетлесе кăларнă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2006, чӳк, 13, 102 №.

**МОРГАУШСКОЕ РАЙОННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**

**РЕШЕНИЕ**

**от 10 ноября 2006 г.** **№ С-14/1**

**О проведении публичных слушаний по проекту бюджета Моргаушского района на 2007 год**

В соответствии со ст.28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ “Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации”, ст. 14 Устава Моргаушского района

Моргаушское районное Собрание депутатов **решило:**

1. Провести публичные слушания по проекту бюджета Моргаушского района на 2007 год 24 ноября 2006 года в 10 часов 00 минут в здании администрации Моргаушского района (в зале заседаний) по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6, 2 этаж.

2. Настоящее решение подлежит опубликованию в районной газете “Çĕнтерӳ ялавĕ”.

**Глава Моргаушского района Ю.А. ИВАНОВ.**

**ПРОЕКТ БЮДЖЕТА МОРГАУШСКОГО РАЙОНА НА 2007 ГОД ПЕЧАТАЕТСЯ НА 5-7 СТР.**

**Юбилей**

*Саламлатпăр*



Муркашра пурăнакан юратнă мăшăра, аннене, хĕрĕме, кинĕме тата аппана – **Зоя Николаевна КИРИЛЛОВАНА** çуралнăранпа 45 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Пурнăç çулĕпе санăн ӳлĕмрен те ку таранччехи пекех шанчăклăн утмалла пултăр, эс утас çулу такăр, ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп, пурнăçу яланах тулăх пулччăр. Хуйха-суйха, чирчĕре пĕлмесĕр пурăнма Турри вăй-хал парса пытăр сана.

26 çул хушши пĕр улшăнмасăр районти çыхăну уйрăмĕнче телефонистка пулса вăй хуратăн, çынсен ыйтăвĕсене вăхăтра тивĕçтеретĕн. Ĕçрен пушаннă вăхăтра “Муркаш” фольклор ансамбльне юрлама-ташлама çӳретĕн. Эсĕ пур çĕре те ĕлкĕрнишĕн эпир санпа пĕрле савăнатпăр, малашне те çапла пулма ăнăçу сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 2 ывăлĕ, амăшĕ, йăмăкĕ, шăллĕ, çывăх тăванĕсем, тус-юлташĕсем.**

Çак кунсенче Муркашри тĕп больницăра вăтăр çула яхăн ĕçлесе вăй хунă врач-физиотерапевт **Николай Филиппович КУЛИКОВ** 60 çул тултарать. Ăна тата поликлиникăри хирурги уйрăмĕнче нумай çул хушши тăрăшса ĕçлекен медсестрана **Людмила Сергеевна НИКОЛАЕВАНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Сире татах нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**Муркашри тĕп больница администрацийĕпе профсоюз комитечĕ.**